26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
24
ЭРНЕКУН
190(6427) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Калинин фронтĕнчи çарсем икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕнтерчĕ те сентябрĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен оборонин чи тĕреклĕ узелĕсенчен пĕрне—ДЕМИДОВ хулине штурмласа тытса илнĕ.

ДЕМИДОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче ГОЛУБЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем чапа тухнă. Вĕсенчен уйрăмах çаксем чапа тухнă:

УСАЧЕВ генерал-майорăн 262-мĕш стрелковăй дивизийĕ, БЕЛЯЕВ полковникăн 270-мĕш стрелковăй дивизйĕ, ДЕГОШИН полковникăн 114-мĕш стрелковăй бригади, ПАВЛОВ подполковникăн 105-мĕш танковăй полкĕ, ДОБЫШКО полковникăн 43-мĕш Хĕрлĕ Ялавлă тупăллă артиллери полкĕ, МЕЛЬНИКОВ подполковникăн 118-мĕш минометнăй полкĕ, АЛЕКСЕЕВ майорăн 273-мĕш инженерла батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе, çав асăннă соединенисемпе чаçсене „ДЕМИДОВСКИ" ят парас, вара вĕсене малашне çакăн пек чĕнмелле тăвас:

262-мĕш Демидовски стрелковăй дивизи,
270-мĕш Демидовски стрелковăй дивизи,
114-мĕш Демидовски стрелковăй бригада,
105-мĕш Демидовски танковăй полк,
43-мĕш Хĕрлĕ Ялавлă Демидовски тупăллă артиллери полкĕ,
118-мĕш Демидовски минометнăй полк,
273-мĕш Демидовски инженерла батальон.

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН

1943 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА

Çеçенхир фронтĕн çарĕсем, наступление ăнăçлăн вăйлатса пырса, ВОРСКЛА шывĕ урлă каçнă та виçĕ кун хушши вăйлă çапăçнă хыççăн паян, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, Украинăри область центрне—ПОЛТАВА хулине, нимĕçсен сулахай çыранри Украинăри оборонин хăватлă узелне тытса илнĕ.

ПОЛТАВА хулишĕн пынă çапăçусенче ЖАДОВ генерал-лейтенантăн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВăН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмăнах çаксем чапа тухнă:

САЗОНОВ полковникăн 9-мĕш гвардейски сывлăш десанчĕн дивизийĕ, БАКЛАНОВ генерал-майорăн 13-мĕш гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă тата Ленин орденлĕ стрелковăй дивизийĕ, ЯКШИН генерал-майорăн 66-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, НИКИТЧЕНКО генерал-майорăн 95-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, АНЦИФЕРОВ полковникăн 97-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕ, БУНЯШИН генерал-майорăн 84-мĕш Харьковски стрелковăй дивизийĕ, СКОРОДУМОВ полковникăн 42-мĕш çăмăл артиллери бригади, ВЛАСЕНКО подполковникăн 301-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, ФЕДОРОВ подполковникăн 57-мĕш танковăй полкĕ, БОЛТУСЕВИЧ инженер-подполковникăн 431-мĕш инженернăй батальонĕ, ТАРАНЕНКО подполковникăн 294-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ тата РОДЯКИН полковникăн 266-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас майпа ПОЛТАВА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ПОЛТАВСКИ» ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

9-мĕш гвардейски Полтавски сывлăш десанчĕн дивизийĕ,
13-мĕш гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă тата Ленин орденлĕ Полтавски стрелковăй дивизи,
66-мĕш гвардейски Полтавски стрелковăй дивизи,
95-мĕш гвардейски Полтавски стрелковăй дивизи,
97-мĕш гвардейски Полтавски стрелковăй дивизи,
42-мĕш Полтавски çăмăл артиллери бригади,
301-мĕш Полтавски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
57-мĕш Полтавски танковăй полк,
431-мĕш Полтавски инженернăй батальон,
294-мĕш Полтавски истребительнăй авиаци дивизийĕ,
266-мĕш Полтавски штурмовой авиаци дивизийĕ.

84-мĕш Харьковски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян сентябрĕн 23-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУСКАВ ПОЛТАВА хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ПОЛТАВА хулине ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнман лăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 23 мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ПОПОВА

Брянск фрончĕн çарĕсем, хăвăрттăн наступлени туса пырса, паян, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, питех те кирлĕ чугун çул узелне тата нимĕçсен Гомель енчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—УНЕЧА хулине çапăçса тытса илчĕç.

УНЕЧА хулишĕн пынă çапăçусенче ФЕДЮНИНСКИЙ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн НАУМЕНКĂН летчикĕсем чапа тухнă.

Уйрăмах çаксем чапа тухнă: ДАНИЛОВСКИЙ полковникăн 197-мĕш Брянски стрелковăй дивизийĕ, МАССОНОВ полковникăн 217-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ВОРОНКОВ подполковникăн 117-мĕш танковăй бригади, СМИРНОВ полковникăн 30-мĕш мотострелковăй бригади.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас майпа УНЕЧА хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисене „УНЕЧСКИ" тесе ят парас.

Малашне çав соединенисене çапла чĕнмелле тăвас:

217-мĕш Унечски стрелковăй дивизи,
117-мĕш Унечски танковăй бригада,
30-мĕш Унечски мотострелковăй бригада.

197-мĕш Брянски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 23-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршывăн столици МУÇКАВ УНЕЧА хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăран вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питех те лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, УНЕЧА хулине ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре пуçĕсене хунă геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи

Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 23 мĕшĕ.

Хĕрлĕ Çарăн генералĕсемпе офицерĕсене Суворов тата Кутузов орденĕсемпе наградăлани

Десна шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçу ĕçĕсене пĕлсе, хастаррăн ертсе пынăшăн тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă çапăçусенче çав операцисене пула пысăк ăнăçусем тунăшăн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ сентябрĕн 18-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх çаксене наградăланă:

1-мĕш степенлĕ Суворов орденĕпе

И. И. Федюнинский генерал-лейтенанта,

И. В. Болдин генерал-лейтенанта.

1-мĕш степенлĕ Кутузов орденĕпе

М. И. Казаков генерал-лейтенанта.

2-мĕш степенлĕ Суворов орденĕпе

8 генералпа офицера наградăланă.

2-мĕш степенлĕ Кутузов орденĕпе

6 генералпа офицера наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

НОВОРОССИЙСКРАН çурçĕр-хĕвеланăçĕнерехре пирĕн çарсем вăйлăн çапăçнă хыççăн **АНАПА** хулипе портне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан **СУ-ПСЕХ, АЛЕКСЕЕВКА, АНАПСКАЯ** ятлă пысăк пунктсене йышăнса илнĕ.

ЗАПОРОЖЬЕ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта тытса илнĕ. Вăл шутра **ТЕРНОВКА, ПЕРВОЗВАНОВКА, НОВО-ГУПОЛОВКА, ЛЮБИМОВКА, ВАСИЛЬЕВКА, ПАВЛОВСКИЙ, НОВО-УКРАИНКА** (Запорожье хулинчен 13 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), **ТАРАСОВКА** ятлă пысăк пунктсене тата **СОФИЕВКА, ЯНЦЕВО, КИРПОТИНО** ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК хули енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, **НОВО-МОСКОВСК** хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 90 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра **МАЯЧКА, ДМУХАЙЛОВКА, ВОДЯНОЕ, ЕЛЕНОВКА, АНДРЕЕВКА, КАЗНАЧЕЕВКА, НИКОЛАЕВКА, ВОЛЬНОЕ, ОРЛОВЩИНА, ПЕСЧАНКА, ОДИНОКОВКА, ЛОЗОВАТКА, АФАНАСЬЕВКА, ВАРВАРОВКА** ятлă пысăк пунктсене, **ГУБИНИХА, ОРЛОВЩИНА** ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ПОЛТАВА енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи **ШИШАКИ, ДИКАНЬКА** ятлă район центрĕсене тата **БОЛЬШАЯ БУЗОВА, БАЛЯСНОЕ, ВАСИЛЬЕВКА, СТАСОВЦЫ, ПЕТРОВКА, БЕЗРУЧКИ, ГОЛОВАЧ, МАЛОЕ ПЕРЕЩЕПИНО, ДРАБИНОВКА, ВЕРХНИЕ ПОЛОГИ, ЧАПАЕВО, ЛИВЕНСКОЕ** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, **ОСТЕР** хулине, **ПЕРЕЯСЛАВ** хулине, **ЗОЛОТОНОША** хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 180 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра Полтава облаçĕнчи **ДРАБОВ** ятлă район центрне, Чернигов облаçĕнчи **НОВАЯ БАСАНЬ** ятлă район центрне, Киев облаçĕнчи **БЕРЕЗАНЬ** ятлă район центрне тата **КАРПИЛОВКА, ЕВМИНКИ, КРИХАЕВО, ЛЕТКИ, СЕМИПОЛКИ, ЯДЛОВКА, ОСТРОЛУЧЬЕ, СЕМЕНОВКА, ВОЙТОВЦЫ, ЕРКОВЦЫ, ВИНИНЦЫ, ВЕЛИКИЙ ХУТОР, БЛАГОВЕЩЕНСК, ВОЗНЕСЕНСК** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 25 километр таран малалла куçса, **ПОЧЕП** хулине, **МГЛИН** хулине, **СТАРОДУБ** хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 260 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра **БОЛОТНЯ, НИКОЛАЕВКА, ШУМАРОВО, ДИВОВКА, ДОЛМАТОВО, ВЫСТРИКОВО, КАРТУШИНО, БОЛДОВКА, ПРИВАЛОВКА, ВОРО-**

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм уйхир ĕçĕсене вĕçлес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртес тата выльăхсене хĕл каçарма колхоз фермисене хатĕрлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттерессиçинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Республикăри малта пыракан колхозсемпе районсем сĕннине шута илсе, çавăн пекех тата колхозниксемпе колхозницăсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре паттăр Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшма тăрăшнине шута илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Сентябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 25-мĕшне çити вăхăтра республикăра ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм уйхир ĕçĕсене вĕçлес, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртес тата выльăхсене хĕл каçарма колхоз фермисене хатĕрлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттерес.

2. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене фронтовой уйăхлăхăн задачисем çинчен мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса пама тата авăн çапас, пахча-çимĕçсемпе çĕрулмине пухса кĕртес, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсене хăвăртрах вĕçлессишĕн, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татассишĕн, выльăхсене хĕл каçарма колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене лайăх хатĕрлессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн организацилеме хушас.

3. Республикăри тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене фронтовой уйăхлăх мĕнле пыни çинчен анлăн çутатса тăрас ĕçе организацилеме, çавăн пекех тата фронтовой уйăхлăха ирттерес ĕçре уйрăмах палăрнă районсен, МТС-сен, ялсовечĕсен, колхозсен, колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне хаçатсен страницисенче анлăн çутатса пырассине организацилеме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт та ăнăçлăн вĕçлер!

Хĕрлĕ Çар малалла, Хĕвеланăçнелле çĕнтерӳллĕн куçса пынине мĕнпур совет халăхĕ пĕтĕм чун-чĕререн савăнса сăнаса тăрать. Совет çарĕсем хăватлăн пыра-пыра çапнипе гитлерла вăрă-хурахсем, йывăр çухатусем тӳссе, каялла сирпĕнеççĕ. Социализмлă тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсем Днепр çыранĕсем патнелле çитеççĕ, тăшмана Киев тата Смоленск патне пымалли вырăнсенче çапа-çапа аркатаççĕ, тăван çĕрсе фашистла ирсĕрсенчен тимĕр шăпăрпа шăлса тасатаççĕ.

Малалла тапăнса пыракан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм çĕршыв пулăшса тăрать. Кашни совет патриочĕ халĕ пĕр шухăшпа—тăшмана пуçĕпех çапса аркатса çĕнтерӳ тăвас сехете çывхартассишĕн хăйĕн мĕнпур вăйĕпе пултарулăхне парас шухăшпа пурăнать.

Совет çарĕсем отечественнăй вăрçă фронтĕнче тăвакан чаплă çĕнтерӳсем, Сталин юлташăн çав çĕнтерӳсене палăртакан аслă приказĕсем Чăваш республикинчи ĕççыннисене ĕçре паттăрла çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Тăван республика обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана срокчен пурнăçа кĕртрĕ, сентябрĕн 8-мĕшĕ тĕлне тырпулсене пухса кĕртрĕ, кĕрхи тырăсене акса пĕтерчĕ. Малта пыракан çĕршер колхозсем государствăна тырă парса татрĕç.

Анчах кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлес тесен, пирĕн партипе комсомол организацийĕсен, советпа çĕрĕç органĕсен, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен халĕ сахал мар вăй хурса ĕçлеме лекет-ха.

Малта пыракан колхозсемпе районсем. тăван Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса тăрассишĕн тăрăшакан колхозниксемпе колхозницăсем кăмăл тунине ырласа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плансене пурнăçлас тата колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе сентябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 25-мĕшне çитиччен фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх туса ирттерме йышăнчĕç.

Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăха чăннипех те фронтри пек ирттермелле. Çакă вăл райисполкомсемпе парти райкомĕсене ĕçре питех те оперативлă пулма, колхозсемпе районсем умĕнче тăракан татăклă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕре мĕнпур колхозниксене мобилизацилеме хушать.

Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăхăн задачисем çинчен колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла, мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлессишĕн социализмлă ăмăртăва татах та ытларах вăйлатмалла.

Вăрнар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем уборка ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлени тата государствăна тырпул срокчен парса татни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн социализмлă ăмăрту пуçарса ячĕç. Вăрнарсем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ: государствăна тырă памалли плана вĕсем 85 процент ытла тултарнă. Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăхра колхозсем хушшинче государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртессишĕн социализмлă ăмăрту çулăмне татах та хăватлăнрах чĕртсе ямалла.

Республикăра авăн çапас ĕç вăраххăн пырать-ха. Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Чкаловски районсем тĕштырăсене çурри те çапман. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Районсенчен пĕри те графика пурнăçа кĕртсе пымасть. Кувакино, Шăмăршă, Шăхасан, Калинино районĕсем кĕрхи çĕртме тумалли плана 3—6 процент кăна пурнăçланă. Техникăллă культурăсемпе çĕрулмине, вăрлăхлăх акнă куракăсене пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатмалла. Республикăри нумай колхозсем кун тĕлĕшпе иртнĕ çулхи йăнăшсене тăваççĕ: ун чухне йĕтĕн-кантăрсене кĕркунне хутса пултармасăр, улăмсене пуçтармасăр хăварчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрлес, выльăх витисене питĕрсе ăшăтас, апат-çимĕçсем хатĕрлес ĕçсене те васкатмалла. Комсомольски районри колхозсенче выльăх-чĕрлĕх пăхакансем выльăх витисене хăйсен аллипех юсарĕç, вĕсенчен ытти районсенчи колхозниксен те пример илмелле.

Фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх татăклă ĕçсен уйăхлăхĕ. Ăна шавламасăр, ĕçлĕн ирттермелле.

Комсомол организацийĕсем уйăхлăха хавхалантарса пыракансем пулса тăма тивĕçлĕ. Комсомолецсен хастарлăхĕпе пуçарулăхĕ куна чăннипех те вĕресе тăмалла. Комсомолецсем хăйсен примерĕпе мĕнпур колхоз çамрăкĕсене ĕçре ертсе пыма тивĕçлĕ.

Агитаторăн большевикла çулăмлă сăмахĕ колхозниксене итем çинче, хирте, фермăра ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе хавхалантарса пымалла. Хăшпĕр агитаторсем, тырă вырса пĕтерне пулсан, агитациллĕ-массăллă ĕçе пăрахма та юрать тесе шухăшлаççĕ. Çакă вăл йăнăш шухăш. Колхозниксем хушшинчи политикăллă агитаци ĕçне кулленех туса пымалла, парти организацийĕсен тивĕçĕ вара—çав питех те кирлĕ ĕçе куллен ертсе пырасси пулса тăрать.

Октябрьти социализмлă Аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарас кун çывхарса килет. Çав чаплă куна пĕтĕм çĕршыв çĕнĕ çĕнтерӳсемпе палăртма хатĕрленет.

Пирĕн республикăна çуракинчи çитĕнӳсемшĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе тунă паха ĕçсемшĕн 1943 çулта Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратнă. Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем тунине çине ответлесе, хамăрăн ĕçри хастарлăха виçĕ хут ӳстерер, тылра гвардеецсем пулар, кăçалхи ялхуçалăх çулне хăвăрт тата пысăк пахалăхпа вĕçлессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер, çапла вара ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсемшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулар.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

НОК, ЛУЖНИ, КАМЕНСКИЙ ХУТОР, ЕЛИНО, МАСАНЫ, КУЙБЫШЕВ, АНДРЕЕВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 3 километртан пуçласа 4 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 3 километртан пуçласа 4 километр малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ.

СМОЛЕНСКРАН сурçĕр-хĕвеланăçнерехри пирĕн çарсем вăйлăн çапăçнă хыççăн ДЕМИДОВ хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра САВОСТЬЕ, БОРКИ, СКУГРЕВА, НИКОВЦЫ, ФОШНЯ, БОЛЬШОЕ АРБТОВО, НОВЫЙ ПОЧИНОК, ЛОБОНОВО, АКАТОВА, СПАСК-ЛИПКИ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 24 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 40 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Новороссийскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман, çӳллĕ вырăнсемпе усă курса, вăйлăн хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем, нимĕçсен хирĕç тăмалли узелĕсене çĕмĕрсе тăкса, Анапа хули патне пырса тухнă та хаяррăн çапăçнă хыççăн ăна тытса илнĕ. 49 тупă, 180 пулемет, 77 миномет, 4000 винтовкăпа автомат, 40 склад, 200.000 патрон, 25.000 снаряд, 100 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсемшĕн çапăçнă чухне тăшман 1200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн авиаци пĕр тĕле пухăнса тăнă тăшман çарĕсене пыра-пыра çапнă. Халăх пурăнакан пĕр пункт çывăхĕнче пирĕн летчиксем нимĕçсен пĕр пехота батальонне çапса салатнă. Тăшманăн 8 батальонĕ çити пĕтерсе тăкнă, 120 автомашина, 15 хир тупине çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Днепропетровск енче пирĕн çарсем малалла куçса пынă. Пĕр гвардейски соединени боецĕсем, Самара шывĕ урлă каçса, шыв хĕрри кантарлăха куçса пынă, вара вĕсем Ново-Московск хулин патне пырса тухнă. Ирхине ирех хула патне Орловщина станцийĕнчен чугун çул тăрăх наступлени туса пыракан пирĕн ытти чăсесем те пырса çитнĕ. Каç пулса килнĕ тĕле пирĕн гвардеец-боецсем, таткăлăн атакăласа, Ново-Московск хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ. Тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чăсĕсем, нимĕçсене хăваласа пырса, 23 тупă, 80 пулемет, боеприпассен 4 складне, продовольстви 7 складне тата горючин 5 складне тытса илнĕ.

* * *

Полтава енче пĕр соединени чăсĕсем икĕ тĕлте шыв рубежĕ урлă каçнă та халăх пурăнакан пĕр пункт патне пыракан çулсем çинче çапăçма пуçланă. Тепĕр участокра совет боецĕсем çапăçса малалла куçса пынă, нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. «Тигр» йышши 6 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши 8 тупă, 31 хир туппи, боеприпассен 2 складне тата тĕштырă хунă пĕр склада тытса илнĕ.

* * *

Киев енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Кун каçиччен хи çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити вĕлерсе тăкнă. Тăшманăн 16 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танкистсем, çав тери хăвăртăн малалла куçса пырса, Киев облаçĕнчи Переяслав хулине тытса илнĕ. Пĕр гвардейски соединени чăсĕсем хаяррăн çапăçнă хыççăн Золотоноша хулине чугун çул узелне йышăнса илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче темиçе вунă тупă, нумай автомашина, боеприпассен тата çар пурлăхĕн пысăк складĕсем пур. Чылай гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, халăх пурăнакан 260 пункта ытла нимĕçсен захватчиксенчен ирĕке кăларнă. Тăшман, Снов шыве çинчи çирĕплетнĕ пунктсемпе усă курса, вăйлăн хирĕç тăрать. Пĕр соединени чăсĕсем Снов шывĕ урлă каçнă та нимĕç оборонин темиçе узелне йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 200 гитлеровеца çити тыткăна илнĕ. Пирĕн тепĕр соединени чăсĕсем, çĕрле 25 километр малалла кайнă та Стародуб хулине вăркăнса кĕнĕ. Кун каçиччен хаяррăн çапăçнă хыççăн совет боецĕсем Стародуб хулине тытса илнĕ. Халĕ пирĕн çарсем тăшманăн аркатса тăкнă чăсĕсене малалла хăваласа пыраççĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Смоленскран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен питĕ кирлĕ пунктне — Демидов хулине тытса илнĕ. Нимĕçсем, хулана темĕн пулсан та хăйсен аллинчех хăварасшăн тăрăшса, питĕ вăйлăн хирĕç тăнă. Вĕсем пĕр кун хушшинче кăна 12 контратака тунă, анчах та совет боецĕсем хавхаланса малалла ыткăннине чарма пултараймаи. Демидов хулишĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 250-мĕш пехотнăй дивизине тата тăшманăн ытти чăсĕсене те аркатса тăкнă. Гитлеровецсен 8000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 300 нимĕçе тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем нимĕçсен 5-мĕш егерски батальонне çавăрса илнĕ те пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 187-мĕш полкĕн пĕр батальонне аркатса тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче тĕрлĕ калибрлă 25 тупă, хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши 2 тупă, 23 миномет тата боеприпассемпе тĕрлĕрен çар пурлăхĕ нумай.

* * *

Çурçĕр флочĕн çыран çинчи батарейисем тăшманăн 8000 тонна водоизмещениллĕ транспортне персе сиенленĕ. Çакăн хыççăн пирĕн торпеднăй катер çав транспорта атакăланă та шыва путарнă.

* * *

Норвегин çурçĕр çыранĕсем патĕнче пирĕн торпедоносец-самолетсем тăшман суднисен хурал карапĕсемпе истребитель-самолечĕсем хӳтĕлесе пыракан караванне атакăланă, нимĕçсен 12.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата ăна хураласа пыракан 2 карапа шыва путарнă. Сывлăшри çапăçура тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

Хура тинĕс флочĕн штурмовик тата истребитель-летчикĕсем Тамань çурутравĕ çинчи пĕр порта тапăннă та тăшманăн десант антармалли хăвăрт çӳрекен 2 баржине путарнă. Сывлăшри çапăçура тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Вилейка облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ сентябрĕн 13-мĕшĕнче халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктра тăракан нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Партизансем пĕр танк, бронемашина çунтарса янă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Хаяр çапăçура 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 12 пулемет тата 90 винтовка тытса илнĕ. Вилейка облаçĕнчи партизан отрячĕсен ушкăнĕ виçĕ эрне хушшинче нимĕçсен фронталла каякан 23 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 14 паровоз, 140 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ.

Пирĕн авиаци Витебск, Гомель, Джанкой чугун çул станцийĕсене тапăнни

Сентябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Витебск, Гомель, Джанкой чугун çул узелĕсенче пухăнса тăнă çар эшелонĕсене тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе пулă пушарсем нумай тухнă. Тăшманăн техникăпа çар грузĕсем тиенĕ поезчĕсем çуннă. Бомбăсем тӳрремĕнех пырса тивнипе боеприпассем тиенĕ темиçе эшелон сирпĕнсе кайнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Чăваш республикинчи колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсем сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Капана хывнă	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Кĕрхи çĕртме тумалли плана тултарнă
Ул тăр	96,3	59,1	18,9	8,7
Элĕк	84,9	51,0	15,7	11,5
Вăрнар	99,1	58,5	39,8	19,3
Йĕпреç	90,0	56,9	7,9	7,4
Ишлей	96,5	59,4	48,2	14,1
[К]а[л]инино	88,0	45,2	31,9	5,8
[К]а[н]аш	90,9	60,1	38,6	12,4
Куславкка	95,2	57,3	45,4	18,7
Комсомольски	100	54,9	29,5	11,2
Красноармейск.	93,4	50,3	52,7	30,4
Хĕрлĕ Чутай	87,1	51,4	37,6	3,1
Кувакино	79,1	44,6	9,2	3,4
Сĕнтĕрвăрри	98,9	56,6	43,4	13,6
Октябрьски	90,3	56,1	26,3	15,1
Первомайски	96,7	43,1	10,1	3,4
Пăрачкав	76,1	39,5	9,0	6,1
Советски	96,3	52,1	26,3	9,9
Сĕнтĕр	95,8	56,5	37,5	12,3
Вăрмар	90,1	60,6	28,3	9,4
Çĕрпӳ	86,9	51,3	37,1	13,7
Шупашкар	92,7	59,7	21,4	17,1
Чкаловски	91,3	42,8	24,6	6,9
Шăмăршă	97,8	55,4	37,5	4,3
Шăхасан	85,9	45,8	18,9	5,7
Çĕмĕрле	83,3	61,3	36,5	5,1
Етĕрне	98,3	54,5	35,4	14,6
Елчĕк	96,0	50,3	49,5	17,5
Тăвай	71,4	36,8	45,3	11,7
Шупашкар хули	100	61,7	41,4	16,4
ЧАССР тăрăх	91,7	52,2	32,6	11,1
Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлнĕ пулнă	80,8	43,7	15,3	6,5

Авăн çапса пĕтерне

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Паттăр Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен те çĕнĕ чаплă çĕнтерӳсем туса пыни районри ĕççыннисене калама çук хавхалантарать.

Сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне 12 колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. «1-ое мая», «Труд», «Большевик» колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Паян пур колхозсем те уйран кĕлтесене турттарса капана хывса пĕтереççĕ. «14 лет Октября», «Заря» колхоз членĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе авăн çапса пĕтерчĕç. Çак кунсенче çĕрулми кăларса пĕтереççĕ.

С. НОСКОВ.

Воскресникe хатĕрленетпĕр

ÇĔРПӲ, сентябрĕн 23-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Çитес вырсарникун, сентябрĕн 26-мĕшĕнче, государствăна массăллăн тырă леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ пулать.

Районри комсомолецсемпе çамрăксем çитес воскресникe тата активлăнрах хутшăнма хатĕрленеççĕ. Халĕ колхозсенче транспорт тата турттăм вăйĕпе ĕç вăйĕ çителĕклĕ. «Молодая сила», «Красный герой», «Машиностроӥ», «Камай» тата ытти колхозсем те, воскресник кунĕнче тырă нумайтарах парас тесе, кунĕн-çĕрĕн авăн çапма тытăнчĕç. Ку ĕçе комсомолецсемпе çамрăксен мĕнпур вăйне мобилизациленĕ.

Е. ПОЛИКАРПОВА,
ВЛКСМ райкомĕн инструкторĕ.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

ЭЛĔК. Каганович ячĕпе тăракан колхозра уйхир ĕçĕнче вăкăрсемпе ĕçлеççĕ. Кунта уборка пуçланиччен 9 вăкăра ĕçлеме вĕрентнĕ. Халĕ вĕсемпе авăн çапаççĕ, кĕлте турттараççĕ, государствăна тырă леçеççĕ.

Ют çĕршывсенче

Бадольо Итали халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Бадольо маршалăн Итали халăхне чĕнсе каланине пĕлтерет.

«Нимĕçсем пире сиен тăвасшăн,— тенĕ çав чĕнсе каланинче.—Çак кекеслĕ хурса сирсе ямалла. Эпир ăна сирсе ярăпăр. Сирĕн тивĕçлĕхĕр—акăлчансемпе тата американецсемпе пĕрле пурте нимĕçсемпе тата хăшпĕр ăссăр итальянецсемпе çапăçасси пулать. Çав итальянецсем, вĕсем, хăйсене хăйсем нимĕçсен аллине панăскерсем, паянтан вара итальянсем тытса çĕреме тивĕçлĕ мар. Ку вăрçăра нимĕçсен ирĕкĕпе тата пĕр вĕсемшĕн кун çеç тери нумай тăкăнчĕ, эпир нимĕçсене хамăра тарçăсене тыткалана пек тыткалама ирĕк пама пултараймастпăр. Паян пирĕн пĕр лозунг—«нимĕçсене хăваласа ярăр!» тенĕ лозунг пуриншĕн те пĕртен пĕр лозунг пулса тăрать.

Бадольо итальянецсене нимĕçсемпе пур майсемпе те кĕрешме, çар уйрăмĕсене сирпĕтерсе ... отрячĕсене тăвма чĕннĕ. Пуринчен ытла—пĕтĕм вăйсемпе пĕр чарăнмасăр кĕрешме чĕнет», тенĕ.

Италин Турцири тата Эйрери дипломатилĕ представителĕсем калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин Анкарари посольстви çапла пĕлтернĕ: посольство тата консульство персоналĕ корольпе Бадольо маршала тĕрĕс пăхăнса тăрассĕ, тенĕ.

Италин Дублинри (Эйре) посольстви те çавăн пекех каланă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 5-мĕш армийĕ Сорренто çурутравĕ çинче Неаполь заливне асăрхаса персе тăма пултаракан чи çӳллĕ вырăнсене пурне те тытса илнĕ. Сорренто çурутравне йышăнса илнĕ хыççăн союзниксен çарĕсем Неаполе çитесси тупăпа персе тивертмелли чухлĕ кăна тăрса юлнă.

Тăшмантан Амалтори тата Эболи хулисене каялла туртса илнĕ.

Акăлчансен çарĕсем Додеканез утравĕсен ушкăнĕнче тăракан Кос утравне йышăнса илнĕ. Халĕ союзниксем вăл утрав çинчи авиаци базипе усă курма тытăннă та ĕнтĕ. Утрав çинчи итальянецсен çарĕсем союзниксен çарĕсемпе çыхăнса çапăçнă.

Кос утравĕ Родос утравĕнчен 50 миля çурçĕртерехре выртать, ăна Турци территорийĕнчен ансăр пролив кăна уйăрса тăрать.

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ, хăйĕн вăйĕсене урăхла йĕркелесе, çаплах малалла куçса пырать, Сан-Чиприано, Пичентино, Монтекорвино-Ровелла тата Кампанья хулисене йышăнса илнĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕ Потенца хулине тытса илнĕ.

Сентябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем çапăçусем пыракан районри çулсене тата тăшман транспортне атакăланă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ НИМĔÇСЕН ГРЕЦИРИ ТАТА РОДОС УТРАВĔ ÇИНЧИ БАЗИСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: сентябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен истребитель-бомбардировщикĕсем тăшманăн Афины çывăхĕнчи, Гераклионри (Крит утравĕ) тата Марицĕри (Родос утравĕ) аэродромĕсене атакăланă. Бомбăсем çĕр çинче ларакан самолетсем хушшинче çурăла-çурăла кайнă.

ФРАНЦУЗ ÇАРĔСЕМ КОРСИКА УТРАВĔ ÇИНЕ ПЫРСА АННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, француз эсминецĕсем иртнĕ эрнере Корсика утравĕн столицине Аяччо хулине француз çарĕсене антарнă. Ку çарсем утрав çинчи патриотсемпе итальянецсен çарĕсене унти нимĕç çарĕсене утрав çинчен хăваласа кăларма пулăшмалла.

КОРСИКĂРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Корсика утравĕ çинче французсен десантпа аннă отрячĕсем итальянецсен çарĕсемпе пĕрле нимĕçсене хирĕç çапăçнă. Корсикăра кĕрешнĕ француз патриочĕсем хĕçпăшал чылай илнĕ, вĕсем вара француз çарĕсемпе пĕрлешнĕ.

Союзниксен 24 бомбардировщикĕ Корсикăн çурçĕр пайĕнчи Ливорно тата Бастия хулисене тапăннă.

Минскра Гиглер тарçине вĕлернĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çĕрле Минскра Германин Белоруссири Кубе ятлă «генеральнăй комиссарне» вĕлернĕ. Кубе вăл Гитлерăн чи усал палачĕсенчен пĕри пулнă. Вăл Белорусси халăхне çав тери тискеррĕн асаплантарса çаратса пурăннă, çавăнпа та Белорусси халăхĕ ăна питĕ курайман.

АНДРЕ ФИЛИП ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн шалти ĕçсен комиссарĕ Андре Филип Алжирта радиопа сăмах тухса каланă. Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет çапла тума йышăнчĕ,—тенĕ Андре Филип:—условисем май парсанах Петэн маршала тата унăн суя правительствисенче ĕçлекенсене пурне те, çавăн пекех тата Германие парăннисене, конституцие пăснисене, тăшманпа çыхăнса ĕçленисене, француз ĕççыннийĕсене нимĕçсен аллине тытса панисене, французсен çар вăйĕсене союзниксемпе е французсемпе çапăçма хушса тăнисене хытă тавăрĕ. Хăйсен çĕршывне тăшман аллине панă сутăнчăксене наказани памалла.

Андре Филип Франци халăхне çакăн пек чĕнсе каланă: «Паянтан пуçласа эсир хăвăра нацишĕн ĕçлеме мобилизациленĕ çынсем тесе шутламалла. Виши хушнисене туса пыракансене каçару пулма пултараймасть. Сирĕн Францишĕн, пĕр Францишĕн кăна тăрăшмалла», тенĕ.

ИРАНРА СОВЕТ СОЮЗĔН ОККУПАЦИЛĔНĔ ТЕРРИТОРИЙĔСЕНЧЕ ГИТЛЕРЛА ИРСĔРСЕНЧЕН АСАП ТУСНĔ ÇЫНСЕНЕ ПУЛĂШУ ПАРАКАН КОМИТЕТ ТУНĂ

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Иран шахĕ сĕннĕ тăрăх, нимĕç захватчикĕсен ирсĕр ĕçĕсене пула хăйсене тăрантарса пурăнакан ашшĕ-амăшĕсене çухатнă совет гражданĕсен çемьисене пулăшма комитет тунă. Комитет председателĕ – шах арăмĕ Фавзия Пехлеви. Комитет членĕнче политика тĕлĕшпе тата обществăра ĕçлекен паллă деятельсем тăраççĕ.

КĔСКЕН

● Венгри столицинче Будапешт хулинче официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: хулари 15 çула çитмен ачасене пурне те хуларан урăх çĕре куçарса каймалла, тенĕ.

● Лаваль приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх, правительствăна хирĕç мĕнле ĕç те пулин тунипе айăпа кĕнĕ кирек хăш француза та полици пăшалпа пеме пултарать.

● Иртнĕ эрнере Копенгаген хулинче Германи валли ĕçлекен предприятисене нумайĕшне ишсе антарнă. Гитлеровецсем çавăншăн Данири чылай хуласенчи халăх çине контрибуци хунă.

Юлашки вăхăтчен нимĕçсем датчансен 8000 офицерĕпе салтакне яхăн тытса хупнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртсе, лайăх пăхса усрар!

Колхозсен уйхирĕсенче, предприятисемпе учреждениесен подсобнăй хуçалăхĕсенче тата хуласемпе поселоксенче пурăнакансен пахчисенче пахча-çимĕçсем пуçтарса кĕртес ĕç пуçланчĕ. Колхозниксем тата рабочисемпе служащисем кăçал хăйсен пахчисенчен тухăçлă пахча-çимĕçсем пухса илеççĕ. Элĕк районĕнчи нумай колхозсем кашни гектартан 200 центнер ытла çĕрулми илеççĕ. Шупашкар хулинче пурăнакан 14 пин çемье кăна хăйсен пахчисенчен 40 пин пăта яхăн çĕрулми пухса кĕме пултарать. Çапла вара нумай вăй хурса пăхса çитĕнтерне пахча-çимĕçсем çĕршывăн продовольстви ресурсĕсене татах та ытларах ӳстерме май параççĕ. Паянхи задача вăл—пахча-çимĕçсене пур çĕрте те вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе, лайăх пăхса усрамалла тăвасси пулать.

Республикăри чылай районсенче пахча-çимĕçсене пухса кĕртме вăхăтра тытăнчĕç тата çав ĕçсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Çапла Ишлей тата Елчĕк районĕсенчи колхозсем çĕрулми кăларас плана сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 45 процент ытла пурнăçланă. Çĕрулми кăларасси Канаш, Куславкка, Красноармейски, Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче начар мар пырать. Малта пыракан колхозсем пахча-çимĕçсене пухса кĕртнипе пĕрлех государствăна пахча-çимĕçсем парассине организацилеççĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăça кĕртнĕ колхозсем халĕ вуншарăн шутланаççĕ.

Анчах малта пыракан районсемпе колхозсен ĕçĕсене шута илнипе кăна пахча-çимĕçсем пухса кĕртесси пур çĕрте те тивĕçлĕ хăвăртлăхсемпе пырать теме пултараймастпăр. Улатăр районĕнчи колхозсем сентябрĕн 20-мĕшĕччен çĕрулми кăларас плана 18 процент çеç тултарнă. Çĕрулми кăларасси Йĕпреç, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав районĕсенче сӳрĕк пырать. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕсем çĕрулми кăлармалли плана 9—10 процент çеç пурнăçланă. Çавăн пек вăрахăн ĕçлесе пахча-çимĕçсене кăларасси кая юлма пултарать. Районсенчи партипе совет организацийĕсен, колхоз руководителĕсен пахча-çимĕç кăларас ĕçе халех хăвăртлатмалла. Кашни колхозрах уйхир ĕçĕсене палăртнă сроксенче пĕтерес шутпа организацилес пулать. Колхозсенче ĕç графикĕсем тумалла. Вĕсене тунă чухне вăрлăхлăх акнă пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Графиксене пурнăça кĕртнине куллен тĕрĕслесе тăрса, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле тăвас пулать. Уборка ĕçĕсемпе пĕр вăхăтрах государствăна пахча-çимĕçсем памалла.

Кăçал предприятисемпе учреждениесем тата уйрăм рабочисемпе служащисем хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсемпе участокĕсенче пахча-çимĕçсем нумай акса турĕç. Вĕсене пухса кĕртес тĕлĕшпе государство пысăк пулăшу парать. Нумаях пулмасть Чăваш АССР Совнаркомĕ хуçалăх организаци руководителĕсене пахчасем тытакансене нӳхрепсем тунă çĕрте пулăшма, пахча-çимĕçсене тăварласа йӳçĕтме катка-пичкесем тума, суту-илӳ организацийĕсене — çав савăт-сапасене сутассине организацилеме хушрĕ. Партипе профсоюз организацийĕсем тата хуçалăх руководителĕсем çине тăрса ĕçленĕ çĕрте çав кăтартусене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри подсобнăй хуçалăхра овощехранилище тунă. Унта пахчасем тытакансене турттăм вăйĕ парса пулăшаççĕ. Анчах пур çĕрте мар-ха çак ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхаççĕ. Суту-илӳ организацийĕсем халĕ те катка-пичкесем сутассине организацилемен.

Пахча-çимĕçсене вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртесси ĕçпе турттăм вăйĕ çителĕклĕ пулнинчен тата уборкăра тухăçлă ĕçленинчен килет. Çĕрĕç работникĕсемпе колхоз председателĕсен ĕçе тĕрĕс организацилесе кашни колхознике нормăна тултарса ĕçлеме пулăшмалла. Ĕç тата турттăм вăйĕ тупас ыйту предприятисемпе учреждениесен подсобнăй хуçалăхĕсенче те çивĕччĕн тăрать. Подсобнăй хуçалăхсенче ĕçлекенсем уборка ĕçĕсене хăйсен вăйĕпех ăнăçлăн вĕçлеме ĕлкĕреймеççĕ. Апла пулсан предприятисемпе учреждени руководителĕсен пушă вăхăтра уборкăра ĕçлеме рабочисемпе служащисене мобилизацилемелле, пахча тытакан уйрăм çынсене турттăм вăйĕ парса пулăшас пулать.

Пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ чухне колхозсенче те, подсобнăй хуçалăхсенче те, çавăн пекех уйрăм çынсен пахчисенче те тăкаксем тунине хирĕç тимлĕн кĕрешни кирлĕ. Пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ тата вăсене усранă çĕрте нимĕнле тăкак та пулмалла мар. Комсомолпа профсоюз организацийĕсен, колхоз председателĕсемпе хуçалăх руководителĕсен уборка ĕçне куллен тĕрĕслесе тăмалла, уборкăра ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелле, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла, пахча-çимĕçсене йышăнса илме мĕн кирлисене вăхăтра хатĕрлемелле. Овощехранилищĕсем, нӳхрепсем, складсем хатĕр пулччăр. Уборка пынă вăхăтрах пахча-çимĕçсене тăварласа йӳçĕтес ĕçсене тумалла. Вĕсене типĕтес ĕçе анлăн сармалла. Типĕтнĕ пахча-çимĕçсене усрама çăмăлтарах пулать.

ВЦСПС секретариачĕ подсобнăй хуçалăхсене уборка иртерме тата пухса кĕнĕ пахча-çимĕçсене пăхса усрама пулăшас тĕлĕшпе сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа уйăхлăх иртерме йышăннă. Çак тапхăрта облаçри тата фабрикăсемпе заводсенчи профсоюз комитечĕсен хăйсен пĕтĕм ĕçне подсобнăй хуçалăхсемпе уйрăм çынсен пахчисенче уборкăна лайăх иртерес шутпа организацилемелле. Вĕсен пахча-çимĕçсем усрамалли çуртсем мĕн таран хатĕррине тĕрĕслемелле. Ку ĕçре профсоюз комитечĕсем çумĕнчи пахча комиссийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсене активлăн ĕçе хутшăнтарас пулать.

Уборка вĕçленнĕ хыççăнах çитес çулта тухăçлă пахча-çимĕçсем туса илме хатĕрленме тытăнмалла. Лайăх йышши вăрлăхсем кирлĕ таран уйăрса хумалла, çĕр участокĕсене çемçетмелле. Ку ĕçсене кашни колхоз, подсобнăй хуçалăх тата пахча тытакан кашни çын тума тивĕçлĕ.

Анса пулнă пахча-çимĕçсене пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртсе, лайăх пăхса усрамалла тăвассине çак кунсенчи ĕççем татса параççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлемелле.

ШУПАШКАРТИ ЭНЕРГЕТИКА ТЕХНИКУМНЕ преподаватель пулса ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекен инженерсем кирлĕ: 1) шалти вутпа ĕçлекен двигательсем, вĕсене йĕркелесе лартасси, юсасси, вĕсемпе усă курасси; 2) ăшă вăйĕпе ĕçлекен станцисем (двигательсем, хурансем, хуран установкисем); 3) теплотехника измеренийĕсемпе автоматика; 4) центральнăй электричество станцийĕсен оборудованийĕ; 5) математика.
Адрес: гор. Чебоксары. угол улицы Чернышевского и Розы Люгсембург, дом № 1 (здание школы № 6).

ЧĂВАШ АССР НАРКОМПРОСНЕ главнăй бухгалтер, бухгалтер-ревизор, материалсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер тата статистик кирлĕ, Наркомпроса пăхăнса тăракан учреждениесенче ĕçлеме бухгалтерсем кирлĕ.
Хваттер параççĕ.
3—1.

ШУПАШКАРТИ АРМАН КОМБИНАТНЕ хулари армансенче ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: мельник-мотористсем, грузчиксем тата чернорабочисем.
Ĕç вăхăтĕнче (ирхине 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен) çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15
2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1834 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.